# Аптрамансем

Кашни кĕнекен кунçулĕ хăйне май сыпăнса пырать. «Аптраман тавраш» сăвăлла роман пирки те çавнах каламалла.

1939 - 1940 çулсенче Петĕр Хусанкайăн «Ухиме инке», «Инспектор», «Тантăшсем», «Сантăр - çĕлĕк çавракан», «Элтиван пичче» ятлă сăввисем пичетленсе тухнăччĕ. Поэт хăйĕн геройĕсене кăшт кулăшларах, вĕсен вак-тĕвек çитменлĕхĕсенчен тăрăхланă пекрех, анчах чĕрери чăн-чăн ăшă кăмăлпа сăнласа панăччĕ. Поэтшăн кăна мар, вулакансемшĕн те çав çынсем тахçан курнă, тахçанах палланă «хамăр ял» çыннисем пек туйăнатчĕç. Кайрантарах çав сăвăсене поэт чăнах та «Хамăр ялтан» ятлă ярăма пĕрлештерчĕ.

«Натали кĕпе тĕрлет» сăвва та эпир лайăх астăватпăр. Вăл тин асăннă сăвăсен картишиех кĕнĕччĕ ун чухне. Чипер хĕр Натали вăл вăхăтра «Хамăр ял» хĕрĕсем хушшинче нимĕнпе те ытлашши палăрса тăмастчĕ-ха. Ялти шкултан вĕренсе тухнăскер, вăл малтан колхоз хирĕнче тракторпа ĕçленĕ, ултан комбайн çӳретме вĕреннĕ, канмалли кунсенче тĕрĕ тĕрленĕ, Хĕрлĕ Çарти каччи валли парне хатĕрленĕ.

«Натали кĕпе тĕрлет» сăвă, хăйне уйрăм шăранса тухнăскер, кайрантарах сăвăлла пысăк романăн пĕр сыпăкĕ пулса тăчĕ. Çапла вара, пирĕн телее, чипер хĕр Натали тап-таса юр пек шурă пир çине ӳкере пуçланă тĕрĕрен пурăна киле хамăр тăван лптературăра чăннипех анлă та илемлĕ произведени пулса кайрĕ. Натали хăй, çав романри йышлă геройсепчен пĕри, чи паллăраххи пулчĕ.

Романра кăтартса панă ĕçсем, сюжет тĕлĕшпе илсен, Тăван çĕршывшăн пынă Аслă вăрçăн малтанхи куненчен пуçланаççĕ те çĕнтерӳçĕсем çав аслă вăрçăран киле таврăннă кунпа вĕçленеççĕ.

Çапла вара «Аптраман тавраш» роман вăрçа вутеĕче çунат илнĕ произведени пулса тăрать, унăн геройĕсем, вăрçă кунçулĕ витĕр утнă

май, авторĕпе пĕрлех ӳсеççĕ, авторĕ те хăйĕн геройĕсемпе пĕрлех ӳсет. Романа поэт пурĕ 13 çул çырнă. Ку произведени - Хусанкай пултарулăхĕнчи çĕнĕ тапхăр, унăн ӳсĕм çулĕнчи чи çӳллĕ пусăм.

Вулакансем, пĕр-пĕр кĕнеке вуласа тухсан, час-часах: «Чăн пулнă-ши кунти ĕçсем?» - тесе ыйтаççĕ.

Хусанкайăн Аптраманĕ пирки те çавăн пек ыйту пулма пултарать. Чăваш поэчĕ илнĕ пĕр йăх-тĕпри çынсем чăн пурнăçра Аптрамап хушаматлă мар, анчах вĕсем, чăн-чăн чăваш çыннисем, ĕлĕкхи хĕн-хурлă саманара та, çак иртнĕ вăрçăра та, нихçан та, нимле йывăрлăхра та аптраман. Поэт пире хăйĕн геройĕсем урлă тăван халăхăн паттăрлăхне, хастарлăхне, ĕçченлĕхне, сăпайлăхне кăтартса парать. Кусем вĕсем пĕтĕмĕшле тĕслĕхсем-ха. Çакăнпа пĕрлех поэт Аптрамансен йăхĕнчи кашни уйрăм çыннăн хăйне уйрăм сăн-сăпатне, хăйне уйрăм кăмăлне, характерне сăнласа кăтартать. Çапла вара пирĕн куç умне хăй йăхĕнчен чи ватти, Аслă Аптраманĕ - Хĕветĕр, Вăталăх Аптраман - Илле, Кĕçĕн Аптрамансенчен - Герман, Энтри, Натали, Палля чĕррĕн тухса тăраççĕ. Пĕр килйышра пурăнакан кашни çыннăн хăйне уйрăм кăмăлĕ, хăйне уйрăм сăнĕ пур. Аичах вĕсене пурне те пĕр пысăк туйăм - килйышăн пĕр пысăк чысĕпе хисепĕ - пĕтĕçтерсе тăрать: вĕсем - Аптрамансем.

Композици тĕлĕшпе «Аптраман тавраш» романа хăй евĕрлĕ калăпланă. Унăн уйрăм сыпăкĕсем кашни хăн тĕллĕн пурăнма пултарнă вăхăтрах пĕр-пĕринпе шалти сюжет йĕрĕпе çыхăнса тăраççĕ, пĕр сыпăкри ĕçсем, ӳсĕнсе пынă май, тепĕр сыпăка куçаççĕ. Драмăри пек çивĕчленсе-тăвăлланса пыракан сюжет темĕпĕр эпир ăна. Çапах та «Аптраман тавраш» - сюжетлă роман. Сюжет аталаннăçемĕн геройсем пĕр-пĕрпнпе тĕл пулаççĕ, уйрăлаççĕ, татах тĕл пулаççĕ, ĕç-пуç улшăннă май, вĕсен кунçулĕсем те, кăмăлĕсем те улшăнаççĕ.

Вăрçă - хăрушă копфликт. Пĕр енче - совет халăхĕ, тепĕр енче - фашизмăн хура вăйĕ. Анчах поэт нимĕçсем хушшинче этем тивĕçне йăлтах çухатман çынсене те, вăрçă пынăçем фашизм мухмăрĕнчен урăла пуçланă çынсене те курма пĕлет («Пуçласа çын тивĕçин чăн хакне пĕлмест-шим çын?..), тыткăна лекнĕ нимĕç салтакĕсем хушшинче коммунистсем те тĕл пулаççĕ («Икĕ нимĕç - ик тĕнче...»).

Поэтшăн чи пахи - Аптрамансем. Аптрамансен йăхĕ сахал мар салтак ӳстернĕ. Çак йăхра хушамат пуçласа яраканĕ - Аптраман Униçĕмĕ ĕлĕк-авал салтакра çирĕм пилĕк çул çӳренĕ, вăл «Параппан патша чухнех аптраман чап илнĕ», теççĕ. (Параппан патша тесе Бонапарта каланă иккен. Аптрамансене кайрантарах «тĕрĕкпе те, япунпа та, нимĕçпе те», шуррисемпе те вăрçма тивнĕ.

Сăмах май каласан, автор хăй геройĕсен ĕçне-хĕлне кăтартса панă чухне историлле тĕслĕхсемпе чылай çĕрте питех те вырăнлă усă курать. Çук, поэт истори аваллăхне кутăн чакса каймасть, халăхăн иртнĕ кунçулĕнчи пархатарлă традицийĕсене паянхи ĕçсемпе çыхăнтарать, çапла вара хальхи кĕрешевĕн пĕлтерĕшне тарăнрах çутатса парать. Сăмахран, Аптраман Хĕветĕрĕн Якур хĕресĕ те (Георгиевский крест) хальхи паттăрсен орденĕ-семпе юнашар ĕлĕкхинчеи урăхларах курăнса каять. Аптраман Энтри хăйĕн çарти тусне, Горький вырăсне - Виктор Басова, кăшт юлташларах тăрăхласа, Мининпа е Пожарскипе танлаштарни те питĕ кăмăллă. Аптарамн Илле хăйĕн ывăлĕ патне «асту Чапаев-земляка» тесе çырни те нумая пĕлтерет. Аптраман Герман аспирантпа ялти учитель тăван халăх историйĕ пирки тавлашни, вĕсем Чĕмпĕр шкулне, Иван Яковлевича, Ашмарина аса илнисем пурте паянхи кунпа лайăх çыхăнаççĕ.

Пĕтĕм романа шалтан ăшăтса тăракан чи вайлă туйăм вăл - çĕршыври халăхсем хушшинчи туслăхпа тăванлăх туйăмĕ, патриотизм.

Поэт çак аслă туйăма декларацилле сăмахсемпе мар, илемлĕ сăнлăхсемпе, витĕмлĕ детальсемпе кăтартса парать.

Акă, Аптрамансем пурăнакан яла ĕлĕк Ярмуххаль тенĕ-мĕн. Халĕ вара ку яла «Чкалов теççĕ колхозне пула».

Аслă летчик пысăк хисепре:
Ывăлсен те çавăнтан вара
Савнă ят Валери ытларах,
Пĕринчен пĕри вĕсем шепрех.

Саратов таврашĕнчи вырăс колхозникĕ Ферапонт Петрович Головатый хăйĕн патриотла пысăк ĕçне пуçарсан, вăрçă вăхăтĕнче колхоз председательне суйланă Аптраман Илле халăх укçипе илнĕ самолета Валерий Чкалов ятне пама сĕнет.

Вырăс халăхĕпе чăваш халăхăн туслăхĕ мĕн тери çирĕп пулни Аптраман Энтрипе Виктор Басов сăнарĕсенче уйрăмах витĕмлĕ курăнса тăрать. Вĕсен пĕтĕм пурнăçĕ, ĕçĕ, савăнăçĕ, хуйхи-суйхи пĕрле. Вăрçă пĕтсен те, Аптраман Энтри вырăс тусне - Виктор Басова хăйсен тăван ялне хăнана илсе каятъ. Çак икĕ халăх ывăлĕн сăнарĕсем вулакана чăннипех те пĕтĕм чун-чĕререн хавас-лантараççĕ. Çакăн пек туслăха пула пирĕп совет халăхĕ тăшмана çĕнтерчĕ, малашне те çĕнтерĕ!

Малта пыракан вырăс культурипе чăваш халăхĕн çамрăк культури пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ӳсни геройсен сăнарĕсенче кăна мар, пĕтĕм роман кĕввинче те, сăвă техникинче те сисĕнсе тăрать. Хусанкай - сăвă ăсти.

Акă, сăмахран, «Пĕрремĕш кун» сыпăкра Натали хăйĕн асламăшĕпе - Сăпани кинемейпе калаçать, унран ĕлĕкхи йăласем çинчен ыйтса пĕлет. Ку сцена таçтан аякран «Онегинри» Татьяна хăйĕн нянипе калаçнисене аса илтерет. Аякран кăна. Поэт çак сыпăка ытла та ăста çырнă. Кунта «Нарспин» силлабикăлла сăввисемпе Пушкин ямбĕсем,

пĕр-пĕринпе ылмашнă пек, питĕ хитре ылмашăнса пыраççĕ. Çавăн пекех çĕнĕ ĕмĕрти чăваш хĕрĕ Натали те кăмăл-туйăм тарăнăшĕ, сăн-сăпат илемĕ тĕлĕшĕнчен Пушкинăн Татьянипе ăмăртнăн туйăнать. Ĕç тĕлĕшĕнчен паттăрлăхпа хастарлăх тĕлĕшĕнчен вара хальхи хĕр хăйĕн авалхи тантăшĕнчен танлаштарма çук çӳлте тăрать.

Поэтăн та, вулаканшăн та Натали сăнарĕ - чи юратнă сăнар. Романа вăл чи ырă, чи таса туйăмсемпе çĕклентерет. Чăн та, Наталин юратăвĕ хăрушă вăрçа пула питĕ телейсĕррĕн татăлать. Савнă çыннăн чĕре таппине тĕлĕкри пек кăна илтсе юлма ĕлкĕрет. Анчах вăл, хăйĕн хуйхи-суйхине пусарса, пĕчĕк ачине çывăрттарнă чухне юрланă сăпка юрри вулаканăн чĕрине çĕнĕ шан-чăкпа хаваслантарать:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш.
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аллупа ан çапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш.
Çывăр, Апграман тавраш!

Романри ытти сăнарсенчен колхоз председателĕ - коммунист Самаев, унăн хĕрĕ Верук, Петĕр Сумбай, унăн амăшĕ Варвари инке асра юлаççĕ.

Эпир кунта вак-тĕвек шăйрăксем, сăвă йĕркисенчи хăшпĕр кăлтăксем пирки чарăнса тăмăпăр. Вĕсем сайра хутра тĕл пулкалаççĕ.

Пирĕн кăштах Аптраман Герман сăнарĕ пирки сăмахласа пăхмалли пур. Герман - нумай вĕреннĕ çын, историк. Вăл тăван халăхăн иртнĕ кунçулĕ çинчен те, пуласси çинчен те нумай калаçать. Ку калаçусене вырăнсăр теме çук. Анчах эпир, ытти Аптрамансемпе танлаштарсан, Германăн чĕрĕ сăн-сăпатне сахалрах куратпăр тата уншăн ытларах

автор калаҫнӑ пек туйӑнать. Ку - хӑйне кура ҫитменлӗх. Хӑш чух Герман тӗресех те калаҫмасть.

Романӑн «Сывлӑш ҫавӑрни» ятлӑ сыпӑкӗнче П. Хусанкай, яланхи пекех, критиксене ятласа илет. Чӑн та, пирӗн литература критикин ӗҫӗ япӑх. Поэт каларӑш, ӑс вӗрентекенсем нумай, хӑшпӗрисем ӑнӑҫлах критиклеймеҫҫӗ. Анчах ҫакна манмалла мар: пирӗп парти критики пур. Парти критики Хусанкая хӑй вӑхӑтӗнче чылаях пысӑк йӑнӑшсене тӳрлетме пулӑшрӗ. Парти критики пулӑшнипе ӗнтӗ Хусанкай тӑван поэзин аслӑ ҫулӗ ҫине тухрӗ. Ҫакна эпир «Аптраман тавраш» романра уйрӑмах лайӑх куратпӑр. Романӑн «Коммунистсем тесе хисеплӗр» сыпӑкӗнче поэт Коммунистсен партийӗн хӑвачӗ ҫипчен чӗререн тухакан сӑмахсемпе ҫырать.

«Аптраман тавраш» - совет халӑхӗн Аслӑ вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи паттӑрлӑхне, фронтпа тыл пӗрлӗхпе, ҫӗршыври тӑванла халӑхсен туслӑхне ӗнентермелле сӑнлӑхсемпе кӑтартса паракан роман. Вӑл хӑйӗн пӗтӗм шалти вӑй-хӑвачӗпе пурнӑҫ чӑнлӑхӗ ҫинче, социализмла реализм принципӗсем ҫинче никӗсленсе тӑрать. Вӑл - поэтшӑн кӑна мар, пирӗн чӑваш литературишӗн кӑна та мар, пӗтӗм совет литературишӗн те пысӑк ҫӗнтерӳ. Вырӑсла куҫарнӑ хыҫҫӑн ӑна пирӗн ҫӗршыври нумай-нумай ҫын вулама тытӑнӗ.

Лайӑх кӗнеке пирки ҫапла ҫеҫ калас килет.

*1957.*